«Чăваш çĕрĕн мухтавлă ывăлĕ» уяв каçĕ
( Сергей Александрович Шлябин çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май)

Илемлетнĕ зал.. «Çитĕнӳ çулĕпе» курав йĕркеленĕ. Çепĕç чăваш юрри янăрать. Мультимедийлă экран çине Сергей Александровичăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен хатĕрленĕ презентаци страницисем тухса пыраççĕ
( «Славный сын земли чувашской»).

1 е. п.
Ырă кун пултăр, хисеплĕ юлташсем, уява килнĕ хăнасем!

2 е.п.
Эпир сире паян çак залра курма питĕ хавас!

1 е.п.
Паян пирĕн питĕ пысăк уяв. Сергей Александрович Шлябин хăйĕн сумлă 90 çулхи юбилейне паллă тăвать . Çав ятпа пуçарăнтăмăр та ĕнте эпир паян , унăн пурнăçĕпе ĕçне- хĕлне ăшшăн аса илме.

2 е.п.
Çурхи ырă кун çĕр çине вăл килнĕ,
90 çул çитрĕ çав сумлă кунран.
Ун чух, ахăртнех, çӳлти Турă çеç пĕлнĕ,
Кам пулĕ ӳссе çитĕнсессĕн унран.

1 е.п.
Чăвашăн чи чаплă, сăваплă юманĕ!
Ытла та тĕреклĕ эс янă тымар.
Çĕршер çул иртсен те хĕрӳллĕн шăранĕ
Пурин чĕринче те вăл чĕртнĕ кăвар.

2 е.п.
Çак савăнăçлă та чаплă уява уçма Ехремкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне Вячеслав Михайлович Ефимова сăмах паратпăр.

Малалла чĕннĕ хăнасене, пĕрле ĕçленĕ çынсене калаçтармалла

2 е. п.

Сергей Алесандрович Шлябин 1922 çулхи мартăн 27 – мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Куракăш ялĕнче çуралнă. 1939 çулта Тенири тулли мар шкултан вĕренсе тухнă хыççăн ялта счетовод – учетчик, бригадир, колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет. 1948 -1951 çулсенче ăна «Искра» колхоз председателĕ пулма уйăрса лартаççĕ. 1952 – 1977 çулсенче «Правда» колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçлать. Пĕр улшăнмасăр 25 çул ертсе пырать вăл çак хуçалăха. Юлса пыракан хуçалăх районта кăна мар, республикăра та малтисен ретне тăрать.

1 е.п.

Сергей Александрович. колхоз производствине çĕнĕ опыт тата ялхуçалăх наукинчи çитĕнӳсене кĕртес тесе ырми – канми тимленĕ. Çĕр ĕç культурине хăпартса пынă май «Правда» колхоз çулсерен тухăçлă тырпул çитĕнтерме пуçлать. Хуçалăх 60 – мĕш çулсенче республикăра сӳс – кантăр туса илессипе уйрăлса тăнă. 1964 – 67 çулсенче колхоз акнă кантăрăн кашни гектарĕнчен 1800 – 2100 тенкĕ тупăш илнĕ. 1967 çулта çĕрулми гектартан 234 центнер, выльăх кăшманĕ – 500, силослăх кукуруза 505 центнер туса илнĕ. Çулсерен выльăх – чĕрлĕх валли тухăçлă апат - çимĕç çитĕнтерни аш – какай, сĕт туса илессине ӳстерме майсем панă. 1966 çулта колхоз кашни 100 га çĕр пуçне 75 центнер аш – какай, 311 центнер сĕт туса илнĕ. Çак çулхине хуçалăх çур миллион тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

2 е.п.

Техникăлла культурăсене туса илессипе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн С. А. Шлябина 1966 çулта Ленин орденĕ **парса чыс тăваççĕ. 1967 çулхи октябрĕн 26 – мĕшĕнче унăн ятне Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ. Обществăлла ĕçсене те активлă хутшăннă вăл. Ăна темиçе хутчен те КПСС обкомĕпе райкомĕн членĕ, Чăваш Республикин Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма суйланă. С. А. Шлябина çавăн пекех «Отечественнăй вăрçă» орденпа, чылай медальсемпе наградăланă. Ĕçри паттăрлăхшăн вара вăл Ленин, Октябрь Революцийĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялавĕ орденсене илме тивĕç пулать. Ăна ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă, « ЧАССР ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята панă.**

**1 е. п.**

**1977 çулта, чире пула, С. А. Шлябин пенсие тухать. Анчах та канма тивмен ăна: 1978 çулта Ехремкасси ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕ пулма суйлаççĕ, 1982 çулччен ĕçлет халăх суйланă ĕçре, 1986 çултанпа вăл тивĕçлĕ канăва каять.**

2 е.п.

Шуçăмпалах хире тухатчĕ,
Яра куна ĕçре çунатчĕ.
Йывăрлăхра пуçа усман
Ялан утнă улăпла, çĕкленӳллĕн малалла.
Пĕрле вăл пулнă халăхпа,
Пĕрле вăл пулнă çĕршывпа.

1 е.п.

Вăл ĕçленĕ,, шеллемен вăйне,
Юлас çук унăн ĕçӳĕ нихăçан манăçа.
Ячĕ халь тӳпери çăлтăр пек ялкăшать,
Чăваш ен манăçми ĕçĕпе мухтанать

1 е.п.

Чыс та мухтав Сергей Александровича! Эпир чăннипех те унпа мухтанатпăр. Çамрăксем те унăн пурнăçне тĕслĕх вырăнне хурса, хăйсен ăс – хакăлне ӳстерĕç, тăван халăхшăн ырми – канми ĕçлессе те шанас килет.

2 е.п.

Эпир ăна нихçан манпастпăр,
Усратпăр хамăр чĕрере.
Ăна сума суса юрлатпăр
Çакă юрă – кĕвĕре

Малалла Сергей Александровича халалланă уяв коцертне курма сĕнетпĕр